# Литературный час «Çутă сăнарĕ манăçмасть»
# («Её светлый образ не забывается»),
# к 130-летию со дня рождения Марфы Трубиной

1 слайд
Литературный час «Çутă сăнарĕ манăçмасть» («Её светлый образ не забывается»), к 130-летию со дня рождения Марфы Трубиной

2 слайд
Ведущи 1:
Куславкка тăрăхĕнче Хирсенче – тыр-пул.
Кимĕсем – çырмасенче, Садсенче – çырла…
Куславкка тăрăхĕнче Купăссем – хĕлхем..
Маçтăрсен сăввисенче Кивелми илем…

3 слайд
Ведущи 2: Ырă кун пултăр хаклăран та хаклă шкул вĕренекенсем. Çак илемлĕ сăвăпа эпир паян «Çутă сăнарĕ манăçмасть» литературă сехетне пуçлатпăр.

Ведущи 1: Эпир паян Трубина Мархви çуралнăранпа 130 çул çитнине халалама пуçтарăнтăмар.

Ведущи 2: Трубина Мархви тесен, куç умне совет саманинче кĕнеке çырма пуçланă пĕрремĕш чăваш хĕрарăм сăнĕ тухса тăрать. Çăмăл мар пулнă унăн пурнăçĕ.

Ведущи 1: Трубина Мархви (Марфа Дмитприевна Трубина) 1888 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнче, Куславкка районĕнчи Аслă Куснар ялĕнче, чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Тăхăр çултах вăл ашшĕнчен тăлăха юлнă.

Ведущи 2: 1902-мĕш çулта Аслă Куснар шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Вĕреннĕ чух, пур чăваш хресчен ачи пекех, кил-çуртра та, уй-хирте те ĕçе тăнă – пулас çыравçă тарпа пиçсе ӳснĕ.

4 слайд
Ведущи 1: Марфа Дмитриевна ялти шкултан питĕ лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă хыççăн 1903-09-мĕш çулсенче Чĕмпĕрти И.Я. Яковлев уçнă Чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Çав вăхăтра вăл илемлĕ литературăпа кăсăкланма пуçлать. Пуринчен ытла Алексей Кольцов поэзийĕ кăмăлне каять. Поэтăн сăвă кĕнекине пĕр эрне хушшинчех пилĕк хут вуласа тухсан хăйĕн те сăвă хайлас ĕмĕт çуралать. Хĕр ача сочиненисем кăмăлланине курса И.Я. Яковлев ăна хавхалантарма тăрăшать.

5 слайд
Ведущи 2: 1909 çулта, учительсем хатĕрлекен Чĕмпĕр Чăваш шкулне вĕренсе пĕтерсен Марфа Шĕнерпуç вулăсĕнчи (халĕ Çĕрпӳ районĕ) Çырмапуçри земство шкулĕнче ĕçлеме тытăнать. Çак вахăтран, 47 çула яхăн, ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнипе пĕрлех тăван чĕлхипе, сăмахлăхпа пĕлӳ парать. Ачасене халăх сăмахлăхне пуçтарас ĕçе явăçтарать, шкулта литература кружокĕ ертсе пырать. 1913 çултан пуçласа мĕн çĕре кĕричченех Куславкка районĕнчи Аслă Куснарти шкулта ĕçлесе пурăнать. Литература ĕçне М.Д. Трубина шкулта ĕçлеме пуçласанах тытăннă. Учительте вăй хуракан çыравçăн малтанхи хайлавĕ 1914 çулта шкул ачисен ал çыру хальлĕн тухакан журналĕнче кун çути курнă. Вăл «Манăн вĕренекенсене» ятлă калав пулнă.

6 слайд

Ведущи 1: 1930 çулта Трубина Мархвине Чăваш Пролетари писатĕлĕсен ассоциацийĕ правленийĕн секретарьне суйлаççĕ. Анчах вăл шкултан та, ялтан та уйрăлаймасть. Ытти нумай автор пекех, пуçламăш тапхăрта Марфа Трубина сăвăсем çырать. 1906-08- мĕш çулсенче çырнă «Елик», «Вилĕм», «Чухăн çын» ятлă сăввисем упранса юлнă.

7 слайд
Ведущи 2: 1919 çулта Хусанта вăл пухса йĕркеленĕ «Чăваш юмахĕсем» ятлă халăх произведенийĕсен кĕнеки тухать. Унăн пултарулăхĕнче чăваш хĕрарăмĕн патша саманинчи тата совет тапхăрĕнчи кун-çул çинчен калакан произведенисем пallă вырăн йышăнаççĕ. «Эрех çулĕ»(1992), «Хăнаран», «Ĕç тухмарĕ» калавсенче писательница совет самани малтанхи тапхăрĕнче чаваш хĕрарăмĕсене пурнăç çулĕ çине çирĕппĕн тăма, авалхи сиенлĕ йăла-йĕркесенчен хăвăртрах хăтăлма чĕннĕ.

Ведущи 1: «Улталанмăпăр» тата «Кивĕ пурнăç çÿпçаппи» калавсем халăх ăс-тăнне минтретсе тăнă тĕшмĕшĕсене тăрă шыв çине кăлараççĕ.

Ведущи 2: Чăваш хĕрарăмĕн совет влаçĕ вăхăтенчи телейлĕ кун-çулне писатель «Праски йăнăшĕ» калавра (1935) лайăх кăтартса панă.

8 слайд
Ведущи 1: Писательĕн «Мучар» повеçĕ чăваш литературинче коллективлă хуçалăха йĕркелесе янине тĕрĕс сăнласа панипе палăрса тăрать.

9 слайд
Ведущи 2: «Ача чухнехи» ятлă автобиографиллĕ повĕçре автор вулакансене чăваш халăхĕн революцинченхи асаплă кун-çулĕпе паллаштарать. Ку произведение писатель çынсен пурнăçне сăнама пĕлни те, историе тĕрĕс ăнланни те лайăх курăнать.

10 слайд
Ведущи 1: Марфа Трубинан «Вупăр» калавĕнче ĕлĕкхи вăхăтра чылай çынсем тĕшмĕшлĕхе пула вупăра ĕненнине, уйăх тĕттĕмленнинчен хăранине çырса кăтартнă.

11 слайд
Ведущи 2: Ача-пăча литературен никĕсне хывас тата ăна ăнлантарас тĕлĕшĕпе те Трубина Мархви нăмай вăй хунă, ачасем вали сăвăсем, юмахсем, калавсем нумай çырнă. «Хĕрлĕ галстук», «Хĕллехи каçсенче», «Ял тăрăх», «Пĕчĕк бригадирсем», «Аякри тăвансем вали» калавсем совет ачисен епле вĕренÿ хастарлăхĕ çинчен тата вĕсем халăх пурлăхне сыхлас тĕлĕшпе яланах сисĕмлĕ те хăюллă пулни çинчен каласа параççĕ.

12 слайд
Ведущи 1: 1946 çулта «Нина» ятлă кĕнеке тухать. Автăр шул ачисен иртнĕ вăрçă вăхăтенчи патприотлă ĕçне сăнласа кăтартнă. «Асăнмалăх, савăнмалăх» тата «Пионерсем» кĕнекесенче автăр шкул ачисен вăрçă хыççăнхи пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тата вĕсен туслă коллективĕ çирĕпленсе пыни çинчен каласа панă.

Ведущи 2: Трубина Мархви драматурги жанрăрне аталантарас тĕлĕшпе те ĕçленĕ: «Çĕр чĕлхи», «Çĕнтерчĕ» (1927), «Килет» тата «Телейсĕр хĕр» (1930) пьесăсенче вăл революци хыççăнхи чăваш ялĕнчи класс кĕрешĕвне, совет çыннисем лав кĕрешÿре тĕрĕслехĕ хăюллăн хÿтĕлеме пултарнине сăнласа панă.

13 слайд
Ведущи 1: Халăха вĕрентес тĕлĕшпе нумай çул хушши тата ăнăçлă ĕçленешĕн Трубина Мархвине Ленин орденĕпе, «Ĕçре палăрнăшăн» тата «1941 – 1945 çулсенчи Аслă

Отечественнăй вăрçă вăхăтенче хастарлă ĕçленешĕн» медальсемпе, Хисеп грамотисемпе наградăланă, Чăваш АССР шкўлĕпе РСФСР шкўлĕн тава тивĕçлĕ учитель ятне панă.

14 слайд
Ведущи 2: Халĕ эпир сирĕнпе Трубина Мархвин «Ача чухнехи» автобиографиллĕ повеçĕн сыпăкĕсене вулăпăр. Çыравçă повĕçре хăйĕн вун пиллĕке çитичченхи тата çав вăхăтри ял халăхĕн пурнăçне анлăн ўкерсе кăтартать.

15 слайд
Ведущи 1: Трубина Мархви 1956 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнче вилнĕ. Вăл пире валли питĕ пуян литература наследине хăварнă. Çакăншăн эпир пурте пирĕн талантлă çыравçăна пуç таятпăр.

16 слайд
Ведущи 2: 1971 çулта Шупашкарти ача-пăча библиотекине Трубина Мархви ятне хисеплесе панă.

17 слайд
Ведущи 1: Шупашкар хулинчи тата Байгулово салинчи урамсене Трубина Мархви ятне хисеплесе панă.

18 слайд
Ведущи 2: Трубина Мархви хайлавĕсем – юмах-и, калав-и, сăвă-и – паянхи кун та кашни чĕрĕ чуна, кашни çынна шеллеме вĕрентеççĕ, вĕсемпе тимлĕрех пулма ыйтаççĕ. Вăл хăй пурăннă вăхăта чĕррĕн ўкерсе кăтартма пултарнă. Ак пирĕн библиотекăра хатĕрленĕ «Çутă сăнарĕ манăçмасть» кĕнеке выставкине сĕнме ыйтатпăр. Выставка виçĕ пайран тăрать.

19 слайд
Ведущи 1: Халь эпир пурте викторинăна хутшăнатпăр.
1) Марфа Дмитриевна Трубина ăçта тата хăçан çуралнă?
2) М.Трубина ăçта ĕçленĕ, унта вăл миçе çул тăрăшнă?
3) Марфа Дмитриевнăна мĕнле медальсемпе тата орденсемпе чысланă?
4) Марфана çырма мĕн хавхалантарнă?
5) Трубина Мархвин паллă повеçĕ мĕн ятлă?
6) Ял шкулне пĕтернĕ хыççăн вăл ăçта вĕренме кĕнĕ.
7) Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче паллă çыраçă вĕреннĕ. Кам вăл, унăн хайлавĕ.
8) Миçе ача пулнă Марфа Трубинан, вĕсем мĕн ятлă?
9) Марфа Трубинан паллă хайлавĕсем.
10) Хăш произведенине Марфа Трубина чи малтан кăларнă, миçемĕш çулта?

20 слайд
Ведущи 2: Пирĕн мероприяти вĕçленчĕ. Чун-чĕререн тав тăватпар сире хаклăран та хаклă шкул ачисем пирĕн литеретура сехетне хутшăннăшăн.